


**Вырăссен аслă поэчĕ А.Пушкин каланă “Эп лартрăм палăк алăпа тумасăр...” сăмахсене тăван халăхăмăрăн асĕнче тата ăсĕнче яланлăхах юлнă Элли Михайлович Юрьев калама пултарасса питĕ иккĕленетĕп: мĕншĕн тесен вăл ят-сумшăн çунман, ăна çĕнсе илетĕп тесе никам умĕнче те пуç пĕкмен, çăмăллăхлă пулатăп тесе тÿре-шара алăкĕн урати умĕнче кĕлмĕçленсе ларман.**

# ПАЛĂК ПУЛСА ТАВРĂНЧĔ



Г.ВЕРБЛЮДОВ сăн ÿкерчĕкĕсем.

КИРЕК хăçан та уçă кăмăллăччĕ, ăш-пиллĕччĕ, çивĕч ăслăччĕ. Кирлех пулсан – вирлĕрех калама та пултаратчĕ, – çапла юлчĕ вăл манăн асăмра. Кÿршĕ ялта çуралнă пулин те ачалăхĕ пирĕн ялта иртнĕ аслă художникăн. Тĕл пулмассерен ял çинчен ыйтса пĕлетчĕ, унăн çыннисемпе кăсăкланатчĕ. Çавăн пек тĕл пулусенчен пĕринче “Тăван ялăм – Çирĕклĕ” ярăмпа хатĕрленĕ эскизсен пуххине парнелерĕ мана. Питĕ йывăр ун çинчен иртнĕ вăхăтпа калаçма, анчах пурнăç чăнлăхĕнчен те пăрăнаймăн. Çичĕ çул çук вăл пирĕн хушăра. Вăл хăйĕн пурнăç тăршшĕнче, кĕске ĕмĕрĕнче наци ÿнер тĕнчишĕн, унăн пуянлăхĕшĕн калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсем пурнăçланă. Элли Юрьев – Чăваш Республикин патшалăх Гербĕпе Ялавĕн, Шупашкар хулин гербĕн авторĕ, шĕкĕр хуламăрăн хисеплĕ гражданинĕ, Чăваш Республикин халăх художникĕ, Чăваш Республикин литературăпа искусство енĕпе паракан Патшалăх премийĕн лауреачĕ, тĕрлĕ енлĕ аталаннă çын: живописец, график, плакатçă, иллюстратор, шрифтовик, медальер... Ăсталăхĕ таса çăл куç пек туллин тапса тăнă паллă ентешĕмĕрĕн, Пĕтĕм Раççейри Геральдика обществин член-корреспонденчĕн.

Пурăннă пулсан Элли Михайлович кăçалхи пуш уйăхĕнче 72 çул тултармаллаччĕ. Шел, Турри кĕске çырнă унăн шăпине: 65 çулчен 65 кун пурăнса çитеймерĕ. Çавăн чухне, 2001 çулхи пуш уйăхĕн 21-мĕшĕнче, Чăваш Ен Президенчĕ Н.В.Федоров “Э.М.Юрьев ятне ĕмĕрлĕх асра хăварасси çинчен” Указа алă пуснă. Э.М.Юрьевăн сăнарлă искусствăна тата чăваш халăх культурине аталантарас тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунине шута илсе Чăваш Республикин Министрсен Кабинетне Э.М.-Юрьевăн пултарулăх пуянлăхне упраса хăварас, сарас тĕлĕшпе тĕрлĕ ĕç пурнăçлама хушнă, Шупашкар хула администрацине Э.М. Юрьевăн вил тăприйĕ çине палăк лартма, художникăн пултарулăх мастерскойĕ вырнаçнă çурт çине Асăну хăми çирĕплетме, Шупашкар хулинче музей-галерея уçма/вулакана пĕлме: 1987 çулта Э.М. Юрьев Чăваш патшалăх ÿнер музейне хăйĕн 800 ытла ĕçне – живописпе графикăн 150 произведенине, тепĕр 10 çултан 600 ÿкерчĕк, иллюстраци, тĕрлĕ шрифт ĕçĕ, эреш-тĕрĕ, медальсемпе гербсен моделĕсемпе эскизĕсене парнеленĕ/, урамсенчен пĕрне тата Шупашкарти ачасен пултарулăх шкулĕсенчен пĕрне Э.М.Юрьев ятне пама сĕннĕ.

→ 2 стр.

# ПАЛĂК ПУЛСА ТАВРĂНЧĚ

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Указри пунктсенчен чылайăшĕ пурнăçланнă ĕнтĕ. Çĕртме уйăхĕн 13-мĕшĕнче тепри те пурнăçа кĕчĕ: Шупашкарти Б.Хмельницкий урамĕнчи паллă çынсен пантеонĕнчи Элли Михайловичăн вил тăприйĕ çинче унăн палăкне уçрĕç. Республика культура министрĕ Р.М.Лизакова манăçми пулăма уçса ЧР Президентне Н.В.Федорова сăмах пачĕ.

– Элли Михайлович пирĕнтен 2001 çулхи кăрлачăн 17-мĕшĕнче яланлăхах уйрăлса кайрĕ. Паян, çичĕ çул иртсен, акă палăк пулса каялла таврăнчĕ, – терĕ республика ертÿçи. – Ĕмĕр тăршшĕпех халăх ĕçĕпе пурăннă Ăстамăр яланах пирĕнпе – ÿкерчĕкĕсем те, вăл эрешленĕ çĕнĕ сас палли гарнитурисем те, Шупашкар хулин кĕперĕсен капăр карлăкĕсем те, пире валли хăварнă ытти ĕçĕ те: кунĕн те çĕрĕн халăхăмăр умĕнче, халăхăмăр асĕнче. Пурăнать пирĕн Элли! Манăн ĕç пÿлĕмĕнчи патшалăх элемĕсенче, культура керменĕсенче, библиотекăсенче, тĕрлĕ шайри ертÿçĕсен сĕтелĕсем çинче, Чăваш Конституцийĕн кĕнекинче, урамсенче, çавра пичетсенче, пирĕн чунсенче пурăнать...

Николай Васильевич шухăшĕпе, палăк уçнă чухне тухса каланисен – мăшăрĕн Галина Алексеевнăн, Чăваш халăх поэчĕн Юрий Сементерĕн, РФ тата ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕн Юрий Виктовăн тата ыттисен сăмахĕнче Элли Юрьев – художник çеç мар, патшалăх çынни те. Пултарулăхĕпе çеç мар, хăйĕн шухăшне çивĕч палăртма пултарнипе те уйрăлса тăнă. Палăк умĕнче каланисене кĕскен çапла пĕтĕмлетме пулать: "Ÿнерçĕ чăннипех универсаллă, ÿнерĕн 12 енĕпе ĕçленĕ. Пур тĕлĕшпе те хăйĕн йĕрне хăварнă. Вăл – пирĕнпе, пур çĕрте те унăн сывлăшне, чĕрĕ те пултаруллă ĕçне туйса тăратпăр. Ÿнер тĕнчинчи Юрьев вырăнĕ халĕ те пушă. Ун пек ĂСТА 100 çулта пĕрре çуралать..."

"Монолит" фирма ĕçченĕсем калăпланă сумлă ĕçре /авторĕсем – Николай тата Алексей Карачарсковсем, архитекторĕ – Михаил Суслов/ таврăнчĕ тăван халăхăмăр сăвапласа пурăнакан Элли Михайлович Юрьев, паллă художник, искусствăна чунне парса ĕçленĕ чаплă ентешĕмĕр. Аллине киçтĕк тытнă, тарăн шухăша кайнă Ăстана сăнарлакан палăк умне чĕрĕ чечексем выртрĕç. Хисеплесе, тав туса.

■ **Юрий ЛИСТОПАД**